**Шелепи, Н. Хусанкай поэта : (ырă сунса)**

Сăн-сăпатна сăнаса
Пăхатăп та - Пушкин сăнĕ пек
Туйăнать вал мана.
Тĕсӳ-питӳ салху,
Сăмаху япшар,
Шăнкăрчă сасси пек
Илтĕнет хăлхана.
Таçтан тупнă эсĕ
Вал поэт сăнне,
Вĕри Африкăри
Негрсен юнне?
Пăхнăçемĕн пăхас килет
Вăл мĕлкӳне,
Илтес килет
Хĕрӳ вут чĕлхӳне.
Те пĕчĕкрен пит
Мĕскĕн ӳснĕрен,
Те йывăр хурлăх
Нутай тӳснĕрен
Çавă йывăр ĕçе
Хăйса тытăннă,
Те хастарлăхна
Лайăх сиснĕрен?
Арăслан пекех
Малалла ыткăнатăн,
Пултарулăхна
Хытă шанатăн.
Хамăр çырулăх
Илемне курасшăн
Хĕрӳ вут çулăмĕ пек
Çунатăн,
Ĕçле-ĕçле,
Вăренсе, хăват пухса,

Сцена сине
Сисе-сике тухса,
Халăх çине хытă
Тинкерсе пăхса,
Çĕлен пек явăнан,
Пуçна ухса.
Хулăн тутусене
Мĕлт-мĕлт уçса,
Иĕпкĕн хура куçна
Мăч хупса,
«Бис! Бис!» тесе
Нумай ал çуптаран,
Хура кăтра çӳçне
Вăй вылятса.
Эсĕ çамрăк та,
Поэт та, студент та...
Санăн ĕмĕт
Нумай-ха малалла.
Хулара чăваш чĕлхи
Чухăн халĕ,
Пит хытă астумалла
Ялалла.
Чăваш чĕлхи
Пуйтăр, çутăлтăр тесен, -
Пирĕн ăна вăй
Нумай памалла;
Ун çулне пĕлсе,
Сиссе юсамалла,
Хăйĕн тымарĕ тăрăх
Ямалла.

*Ялав. – 1966. – № 5. – С. 24-25 ; çавах // Ялав. – 1977. – № 1. – С. 24.*